АСА ИЛӲ

# А.П.ЧЕХОВ ЙĂМĂКĔПЕ ТĔЛ ПУЛНИ

1946 çулта мана, Шупашкарта ĕçлекен çынна, Крымри, "Форос" санаторие кайма путевка пачĕç. Унта Тăван çĕршыври хуласемпе ялсенчен килнĕ тĕрлĕ халăх çынни нумайччĕ. Вăрçăра аманнă çынсем те пурччĕ. Пурте пĕрле лайăх, килĕштерсе пурăнаттăмăр...

Хĕвеллĕ пĕр кун пире, санаторире канакансене, Ялта хулине экскурсие илсе кайрĕç. Унта вырăссен аслă писателĕ Антон Павлович Чехов пурăннă çурта кĕрсе куртăмăр. Ку – икĕ хутлă илемлĕ çурт. Ăна писатель хăйне кăмăла каймалла тутарнă теççĕ. Çурт çумĕнче сад пахчи. Унта çыравçă лартнă йывăçсем тӳпенелле кармашаççĕ. Кайăксем юрă шăратни чун-чĕрене çĕклет.

Тĕлĕнмелле хитре, илемлĕ вырăнта ларать çурт. Çывăхрах Хура тинĕс сарăлса выртать.

Ку çуртри экспонатсем, материалсем, сăн ӳкерчĕксем писателĕн пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе лайăх паллаштараççĕ.

"Çак çуртра вăл "Чие сачĕ" пьесине, "Шырланта" повеçне, "Çĕнĕ кун", "Архиерей" калавĕсене çырнă. Кунта Максим Горький, Иван Бунин, Александр Куприн, Владимир Короленко писательсем, Сергей Рахманинов композитор, Федор Шаляпин юрăçă, литературăпа искусствăн тата ытти паллă ĕçченĕсем пулнă", – тет пире экскурсовод.

А.П.Чехов çуртĕнче пулни, унăн пурнăçĕпе, пултарулăхĕпе паллашни чун-чĕремĕрте пысăк мăнаçлăх çуратрĕ. Писательсен ĕçченлĕхĕ, пурнăçа юратни, халăха хисеплени, çынсен сывлăхĕшĕн тăрăшни – çĕр çинче пурăнакан кашни çыншăн ырă тĕслĕх.

"Халĕ кунта Антон Павловичăн йăмăкĕ, Мария Павловна, пурăнать. Вăл ку çурт чысĕшĕн çав тери тăрăшса ĕçлет. Хаяр вăрçă пынă кунсенче те ăна, кунти пуянлăха фашистсенчен сыхласа хăварас тесе тăрăшнă. Халĕ те вăл пире нумай пулăшать. Уншăн эпир ăна пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе тав тăватпăр", – терĕ экскурсовод. Материал хыççăн материал, çĕнĕ япала хыççăн çĕнĕ япала. Пурне те куçпа курас килет.

Эпир, музее экскурсие пынă çынсем, Антон Павловичăн йăмăкне Мария Павловнăна курасшăн пултăмăр. Анчах та экскурсовод пире: "Вăл ватă ĕнтĕ, тухса çӳреймест", – терĕ.

Эпĕ хăюллăрах пултăм пулас: экскурсовода хам сăвă çырни çинчен пĕлтертĕм, чăвашсем Антон Павлович Чеховăн чылай хайлавне хăйсен тăван чĕлхипе вуланине каларăм, юлашкинчен Мария Павловнăпа тĕл пулма тархасласа ыйтрăм.

Экскурсовод: "Кĕрсе калаçса пăхамха, Мария Павловна хăй мĕн калĕ", – терĕ те пӳлĕме кĕрсе кайрĕ. Нумаях кĕтмерĕм.

"Халех тухать. Эсир ăна ак çак вырăнта кĕтсе тăрăр", – терĕ экскурсовод. Часах Чеховăн йăмăкĕ тухрĕ. Хăй ватă, çӳçĕ шап-шурă. Куçĕсем ăслăн çунса ялкăшаççĕ. Питĕ тараватт калаçать. Эпĕ ăна хампа паллаштартăм, Антон Павлович Чеховăн чылай произведенине чăвашла куçарни, вĕсене хамăр çав тери килĕштерсе, юратса вулани çинчен калакала патăм. Куçарас ĕçе пирĕн паллă писательсем Хветĕр Уяр, Иван Мучи, Петр Осипов, Леонид Агаков, Василий Алагер хутшăнни çинчен пĕлтертĕм.

"Эсир писателе, унăн произведенийĕсене хисеплени, юратса вулани мана çав тери савăнтарать", – терĕ Мария Павловна. Сăмах хыççăн сăмах. Эпĕ Антон Павлович мăшăрĕн, Ольга Леонардовна Книппер-Чеховăн пурнăçĕ çинчен те ыйтса пĕлме хăю çитертĕм.

"Ольга Леонардовна Мускаврах пурăнать. Сывлăхĕ те аптăрамасть. Ялта хулипе пире манмасть, килсе кайма та вăхăт тупать. Питĕ лайăх, пултарулă, ырă кăмăллă çын. Ĕмĕрĕ вăрăм пултăрччĕ ĕнтĕ", – терĕ Мария Павловна.

Калаçу хĕрсе пынă вăхăтра эпĕ экскурсовод Мария Павловнăна нумай тытса ан тăрсамăрччĕ, вăл халĕ часах ывăнать тенине аса илтĕм те манпа калаçма вăхăт тупнишĕн чун-чĕререн тав турăм.

"Крымран киле кайсан, чăвашсене, Антон Павлович Чехов произведенийĕсене куçаракансене – пурне те салам калăр. Эпĕ чăваш халăхне ырлăх-сывлăх сунни çинчен пĕлтерĕр. Хăвăрăн та ĕç-хĕлĕр ăнса пытăр", – терĕ Мария Павловна.

■ **Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ,**
**Чăваш халăх поэчĕ,**
**РСФСР тата Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**